Президент Указне пурнăçлана май

# Çĕнĕ урамсене электрификацилесси

***Ялсен малашлăхĕ тата ял хуçалăх аталанăвĕ – Чăваш Республикин Президенчĕпе Правительстви умĕнче куллен тăракан ыйтусем. Вĕсене ăнăçлă татса пани туллинех Чăваш Ен малашлăхĕпе çыхăннă. Çавăнпа та çак кăткăс ыйтусене вырăнсенчи самоуправлени органĕсем те тăтăшах кун йĕркинче тытаççĕ. ЧР Президенчĕн 2009 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчи «Чăваш Республикинче çĕнĕ урамсене (ялсене) хăвăртрах электрификацилесси çинчен» 99-мĕш номерлĕ Указĕ те çавăн çинченех калать. Епле пурнăçланать-ха асăннă саккун Муркаш районĕнче? Çак ыйтупа эпир район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалист-эксперчĕпе Александр Юлианович СКВОРЦОВПА тĕл пулса калаçрăмăр. Çак калаçупа хаçат вулакансене паллаштарас тетпĕр.***

**– Александр Юлианович, Чăваш Президенчĕн Указне мĕнле кăмăлпа кĕтсе илтĕр-ха эсир? Юлашки 10-15 çулта чăвашсем пурăнакан вырăнсенче çине-çинех çĕнĕ урамсем çĕкленчĕç. Ку вара çамрăксем ялтах пурнăç йăвине çавăрни пирки калать. Анчах юлашки вăхăтченех çамрăк çемьесем йĕркеленĕ çĕнĕ урамсенче электричество çути çивĕч ыйту пулнă. Президентăн Указне пирĕн ялсене çутта кăларама пулăшать тесе йышăнмалла-тăр.**

– Сăмах çĕнĕ урамсем пирки çеç пырать пулсан, капла каласан та пысăк йăнăш пулас çук. Мĕншĕн тесен иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчен çĕкленнĕ урамсем чăваш ялĕсене çĕнĕ сăн кĕртрĕç. Вĕсем ял çыннисем те хăйсен пурнăç условийĕсене тĕпрен улăштарни пирки калаççĕ. «Ялсен обществăлла инфраструктурине аталантарма 723 миллион та 600 пин тенкĕ хушма укçа-тенкĕ каймалла. Вĕсенчен 340 миллионĕ – çĕнĕ урамсене (яллă вырăнсене) хăвăрт электрификацилесси пирки калакан Указа пурнăçлама», – тесе палăртрĕ Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров 2010 çулхи нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинетĕнче иртнернĕ ларура. Республика ертӳçисем ялсем çине çакăн пек тимлĕх уйăрни ялсен инфраструктурине çывăх вăхăтрах çĕнетсе улăштарасси пирки иккĕленӳ çук. Ăна валли кашни ял тăрăхĕн пуçлăхĕн, вырăнти депутатăн, ял çыннин ответлăха туйса ĕçлемелле кăна. Çĕнĕ урамсене (ялсене) электрификацилессипе республикăри тĕллевлĕ программа пурсăмăр та пĕр тĕллевпе ĕçлесен ялсен инфраструктурине лайăхлатассипе масштаблă проект пулса тăмалла. Ăна пурнăçа кĕртни ялсен пурнăçне тĕпрен улăштарĕ, яла çĕннине илсе çитерĕ.

**– Республика çӳллĕшĕнчен Муркаш шайне анар-ха. Пĕтĕмĕшле тĕллевĕ пур, укçи-тенкине уйăраççĕ. Районта президент указне пурнăçласси мĕнле анлăшра-ха?**

– Президент указĕ эпир тахçантанпах кĕтнĕ йышăну пулчĕ. Унпа туллин усă курса пирĕн халĕ çывăх вăхăтрах 56 çĕнĕ урама электричество çути кĕртмелле, унта пурăнакан çамрăк çемьесене тулли цивилизаци шайне кăлармалла. Çавăнпа та указ кун çути курсанах эпир ĕçе кӳлĕнтĕмĕр. Ăнланатпăр, кунта кĕтсе ларма юрамасть. Çакна ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те халĕ тăтăш асра тытаççĕ, ку ыйтăва хăйсен кун йĕркинче пĕрремĕш вырăна лартаççĕ. Çĕнĕ урамсене электрификацилессипе района укçа-тенкĕ мĕн чуль килесси кашни ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çаврăнăçулăхĕнчен килет. Уйрăмах хастаррисем 17 çĕнĕ урама электрификацилессипе проектсем хатĕрлерĕç те ĕнтĕ. Вĕсем халĕ электричество линийĕсен хуçисем патĕнче тĕрĕслевре.

**– Ĕçĕсем пуçланни лайăх-ха, анчах тумалли ĕçсен калăпăшĕ те пĕчĕкех мар иккен.**

– Çавăнпа та çывăрса юлмалла мар та паян. Çакна ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем манмасса шанас килет.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

Обществăлла вырăнĕ-чĕрлĕх пăхакансем патĕнче

# Ĕçĕпе ырă ята тивĕçрĕ



*«Ĕç çынна илем кӳрет», – тенĕ те чăваш çынни авалтанах, тăванне-пĕлĕшне е çывăх çыннине ĕçне кура хакланă, малашлăх çыхăнусене йĕркеленĕ. Халăхăмăрăн çак ăслăлăхĕ паян та пирĕн пурнăçран иксĕлмен-ха. Çавăнпах-тăр хуçалăхсене çитсен ĕç коллективĕсенче ĕçри маттурсене ним ыйтмасăрах тĕслĕх вырăнне кăлараççĕ. Пĕрле ĕçлекенсем юлташĕсен ĕçри ӳсĕмĕсемпе хĕпĕртени вĕсен чун пуянлăхне кăтартакан пулăм тесе хаклассăм килет.*

*Хăйĕн ĕç ĕмĕрне «Герой» ял хуçалăх производство кооперативне халаллана Валентина Алексеевна Леонтьева (сăн ӳкерчĕкре) пирки хуçалăхра ыррипе кăна асăнаççĕ. 1981 çулта Çĕньял Шурчари сĕт фермине ĕне сума пынă Валентинăшăн кунти ĕç-хĕл ачаллах паллă пулнă. Амăшĕнчен – Праски аппаран – вăрттăн ĕне сума фермăна сахал чупнă-и хĕрача? Çавăнпа Валентина Алексеевна паян пире «фермăрах çитĕнтĕм» тенинчен тĕлĕнме кирлех-ши? Амăшĕ ĕне сунă çĕрте нумай çул ĕçленĕ пулсан, хуçалăхри тимĕрçĕре ырми-канми вăй хунă ашшĕ Алексей Петрович Степанов та пенсие фермăра хуралçăра ĕçлесе тухрĕ. Çаксене шутласан тата паян Валентина Алексеевнан мăшăрĕ Анатолий Геннадьевич та асăннă фермăрах ĕнесем пăрулаттаракан уйрăмра ĕçленине пăхсан, Валентина Алексеевна Леонтьева хăйĕн ĕç вырăнĕнчех.*

*Иртнĕ çулхи техник-осеменаторсен республикăри конкурсĕн çĕнтерӳçи В. А. Леонтьева пĕлтĕрхи районти экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕпе «2009 çулхи чи лайăх техник-осеменатор» ята тивĕç пулчĕ.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Эсир пĕлесшĕнччĕ

# Çĕр налукĕнчи çĕр кадастрĕн хакĕ

***Çĕр налукĕ паян халăхра нумай тĕрлĕ калаçу çуратать. Хăш-пĕр ыйтусем çине хурав тупас тесе йĕркелерĕмĕр те ĕнтĕ паянхи калаçăва. Пирĕн ыйтусем çине паян Чăваш Республикин куçман пурлăх кадастр агентствин Федераллă Управленийĕн куçман пурлăха кадастр хакĕ паракан пай пуçлăхĕ Александр Иванович ЦАРАПКИН хуравлать.***

**– Кадастр хакĕ çĕр налукĕ тӳленĕ чух çиеле тухать. Унăн пысăк виçи налук тӳлекенсене тивĕçтерет пек-и е?..**

– Ку тĕлĕшпе Раççейăн Чăваш Республикипе ĕçлекен куçман пурлăх Управленине гражданасемпе предприятисенчен тăтăшах ыйтусем килеççĕ. Уйрăмах çĕрĕн кадастр хакне çĕнĕрен пăхса тухнă хыççăн. РФ Налук кодексĕн 31-мĕш главинче çĕр налукне вырăнти налук тесе йышăннă.

Çĕрĕн кадастр хакне никама пăхăнман хаклавçă туса хатĕрлет. Çĕрĕн кадастр хакĕ ӳсни унпа усă куракан çĕр налукĕн ставки те хăпарнине пĕлтермест-ха. Ку виçене муниципаллă влаç органĕсем йышăнаççĕ.

**– Çĕрĕн кадастр хаклавне мĕн-мĕн вăхăтра ирттереççĕ?**

– Кадастр хаклавĕ – вăл е ку категорие кĕрекен çĕр участокĕсене массăллă хак пани. Патшалăхăн паян ĕçлекен законодательствипе килĕшӳллĕн çĕрсен кадастр хаклавне 3 çулта пĕрререн ытла е 5 çулта пĕрререн сахалрах ирттерме юрамасть. Çĕрĕн кадастр хакĕ ун тĕлĕшпе налук хурассипе тата çĕршĕн аренда тӳлевĕ илессине йĕркелессипе çыхăннă.

**– Александр Иванович, юлашки çулсенче мĕнле çĕрсене кадастр хаклавĕ пама май килнĕ-ха?**

– Ку ĕç пирĕн пĕр вырăнта тăмасть. 2007 çулта яллă вырăнсенчи çĕрсенне кадастр хакĕ турăмăр. 2008-2009 çулсенче патшалăх кадастр хаклавне промышленность, энергетика, транспорт, çыхăну, радиовещани, телевиденипе информатика тата космос ĕçĕ-хĕлĕ пĕлтерĕшлĕ, оборона, хăрушсăрлăх, ятарлă тĕллевлĕ, уйрăмах сыхлакан çĕрсем çинче туса иртертĕмĕр. Вĕсен кадастр хакне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ иртнĕ çулхи çĕртме уйăхĕнче çирĕплетрĕ, вĕсем 2010 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вăйра тăраççĕ.

Кунпа пĕрлех сад пĕрлешĕвĕсемпе дача участокĕсенчи çĕрсен кадастр пахалăхне те тĕрĕслерĕмĕр. Вăрман фондĕнчи çĕрсен кадастр пахалăхне тĕрĕслессипе пуçламăш ĕçсем турăмăр.

**– 2010 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен ĕçе кĕртнĕ кадастр хакĕсем еплерех?**

– Кадастр хаклавне çирĕплетнĕ рекомендацисемпе тата йĕркепе пурнăçларăмăр. Çак хаклавра промышленность тата ытти ятарлă пĕлтерĕшлĕ çĕр участокĕсен кадастр хакĕ 5-6 хут ӳсрĕ, уйрăмах сыхлакан территорисенче – 3-4 хут. Çĕрсен кадастр хакĕ ӳсине Чăваш Енре çĕр рынокĕ хăвăрт аталаннипе ăнлантармалла.

**– Вырăнти самоуправлени органĕсем çулталăк хушшинче çĕр налукĕн ставкине пĕчĕклетме пултараççĕ-и?**

– Налук кодексĕпе килĕшӳллĕн налук виçине чакармалли нормативлă актсене çулталăк тăршшĕпех йышăнма пулать, анчах вĕсем çулталăк пуçламăшĕнче çеç ĕçе кĕрейреççĕ.

**– Çĕрсен кадастр хакĕпе ăçта паллашма пулать?**

– Вăл е ку çĕр участокĕн кадастр хакне патшалăхăн куçман пурлăх кадастрĕнчен çырса илме пулать. Çакна валли хăвăр районти «Çĕр кадастрĕн палати» федераллă патшалăх учрежденийĕн подразделенине çитсе килĕр.

**А. ПЕТРОВ**
**калаçнă.**

Районадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Çитĕнекен ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи мартăн 2-мĕшĕнчи 118 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Глафира Михайловна ИВАНОВАНĂ**, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн пуçламăш классен учительне;

– **Юрий Семенович ЯКОВЛЕВА**, Йӳçкасси шкулĕн учительне.

Следстви комитетĕнчен

# Усал сăмах ан калăр

***Паян йĕрке хуралçисене хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлама пĕртте çăмăл мар. Вăл е ку гражданина саккуна пăснăшăн асăрхаттарсан та милици сотрудникĕсем тĕлĕшпе тĕрлĕрен киревсĕр сăмах калакансем тупăнаççĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн вĕсене ответ тыттарма çук-ши? Пĕрне явап тыттарсан ыттисем те лăпалассăн туйăнать.***

**Александра ИВАНОВСКАЯ.**
Мăн Сĕнтĕр сали.

**Вулавçă ыйтăвĕ çине Етĕрнери следстви уйрăмĕн следователĕ, 3-мĕш класлă юрист Л. ДАВЛЕТШИН хуравлать:**

– 2010 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрте çул хĕрринче ларакан автомашинăри А. Старшов пассажир водителĕн документĕсене тĕрĕслекен çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторне Ю. Васильева юлташĕсем умĕнчех усал сăмахсем каласа пĕтерет. Ĕç вырăнĕнчи милици сотрудникĕн чысне вараланăшăн ун пирки çав кунах уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Ĕçе Шупашкарти Ленин район сучĕ пăхса тухрĕ. Суд А. Старшова икĕ çул условнăй майпа ирĕкрен хăтарчĕ.

Пулса-иртни районта пурăнакансене йĕрке хуралçисем умĕнче чĕлхене ирĕке ямалла марри пирки калать.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Интереслĕ тĕл пулу

Çатракассинчи вăтам шкулта йăлана кĕнĕ тăрăх кашни тунти кун класс сехечĕсем иртеççĕ. Учительсемпе вĕренекенсем тĕрлĕрен темăсемпе ыйтусем хускатаççĕ вĕсенче: тĕнчери пулăмсем, политика ыйтăвĕсем, уяв каçĕсемпе КВНсем ирттересси, тĕрлĕрен тĕл пулусем йĕркелесси.

Нарăс уйăхĕ те пĕтĕмĕшле вĕрентӳ процесĕнчен уйрăлса тăмарĕ. Ăна вĕрентекенсем те, шкул ачисем те лайăх ăнланчĕç. Умри тĕллевсене пурнăça кĕртсе çак уйăхра пур класра та çарпа патăрлăх темипе класс сехечĕсем иртрĕç. Нихăш класс ачи те çак мероприятисенчен пăрăнса юлмарĕ. Вĕсене интереслĕрех ирттерес тесе тимлекенсем вара кашни класрах палăрчĕç. Пĕр кунхине эпир, 7-мĕш класра вĕренекенсем, ялти моделлĕ библиотекăра пухăнтăмăр. Çакна валли сăлтавĕ те пулчĕ. Асăннă кун эпир хамăра вĕрентекенсем пулăшнипе 1979-1989 çулсенче Афганистан Республикинчи вăрçăна хутшăннă хамăр ентеш-ветерансемпе – интернационалист-салтаксемпе – тĕл пулу йĕркелерĕмĕр.

Тăван çĕршыв хăйĕн паттăр салтакĕсене нихăçан та манмасть. Çапла вара нарăсăн 15-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕнче интернационалист-салтаксен кунне уявласси ырă йăлана кĕчĕ. Шăпах çак кун Совет Çарĕсене Афганистан çĕршывĕнчен илсе тухнăранпа 21 çул çитрĕ. Çак кун пирĕнтен инçерех те инçерех юлса пырать пулсан та, вăрçă инкексинкекĕ пирĕн ума уççăнрах та уççăнрах тухса пырать кăна. Асăннă вăрçăна Чăваш Республикинчен 4,5 пин çамрăк хутшăннă. Питĕ шел, анчах вĕсенчен 115-шĕ ачалăхăн савăк çулĕсем иртнĕ вырăнĕсене каялла таврăнаймарĕ, 4-шĕ хыпарсăр çухални те – чăваш халăхĕшĕн пысăк çухату.

Афганистан вăрçин вутçулăмĕ пирĕн ял каччисемшĕн те айккипе пăрăнса иртмен. Анчах пирĕн аттесемпе пиччесем çак вăрçăна хутшăнса аслă ăрури çĕршыв хӳтĕлевçисен ятне яман. Пирĕн шкултан вĕренсе тухнă хыççăн çĕршывăн интересĕсене сăртлă-туллă Афганистан çĕршывĕнче хӳтĕленĕ И. И. Васильев, В. В. Никитин, Ю. Н. Димитриев, Г. И. Соловьев тата А. В. Матвеев иртнĕ кунсенче пирĕн шкулта хăнара пулчĕç. Вĕсемпе эпир тĕл пулу йĕркелерĕмĕр. Аслă тусăмăрсем каласа панинчен салтаксен пурнăçĕпе, службăри йăла-йĕркепе, вĕсем сăрт-ту тепĕр енче юлнă Тăван çĕршывшăн тата ашшĕ-амăшĕсемпе çывăх тус-тантăшĕсемшĕн епле тунсăхланипе паллашрăмăр.

Пирĕн тĕл пулу каçĕ хăйне евĕр йĕркеленсе иртсе пычĕ. Малтанах пирĕн класс ертӳçи Людмила Валериановна Никитина Афганистан вăрçин çул-йĕрĕпе паллаштарчĕ тата «О солдатах необъявленной войны» мультимеди презентаци кăтартрĕ. Библиотека ертӳçи Вена Петровна Конузина хамăр ял тăрăхĕнчи интернационалист-салтаксем пирки каласа кăтартрĕ. Ун хыççăн сăмах интернационалист-ветерансем илчĕç. Илья Иванович тата Владимир Васильевич тĕл пулăва пухăннă ачасене кăсăклине нумай каласа пачĕç. Туслă калаçура ĕнерхи салтаксем пирĕн шкул ачисене хăйсем салтакра ӳкерттернĕ сăн ӳкерчĕксене те нумай кăтартрĕç. Ачасем – уйрăмах арçын ачасем – питĕ тимлĕ итлесе ларчĕç ветерансене. Çавăнпа пĕрлех ачасем нумай ыйтусене хускатрĕç те кашнин çинех тулли хуравсем илчĕç.

Тĕл пулу пурне те килĕшрĕ. Ачасем 20-25 çул каялла хăйсем пекех асăннă шкулăн партисем хушшинче ларнă аслă юлташĕсемпе пĕрле тăрса асăнмалăх сăн ӳкерчĕк ӳкерттернипе тĕл пулу вĕçленчĕ.

Кăçал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пирĕн вată асаттесем çĕнтернĕренпе 65 çул çитес умĕн вĕсен мăнукĕсем те çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлани пире те хамăр Тăван çĕршыва хытăрах юратмалли пирки асăрхаттарчĕ.

Çапла тăвасчĕ те.

**Алена СЕМЕНОВА,**
**7-мĕш класра вĕренекен.**